Приложение
к основной образовательной программе
основного общего образования,
утвержденной приказом
директора МБОУ «Чиричкасинская ООШ»
от 30 августа 2022 г. № 102

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

*основного общего образования*
**по родному языку (чувашскому)**

составлена учителем родного языка (чувашского)
***Матвеевой Ниной Ивановной***

Срок реализации: 2022-2023

## I. Ăнлантарса пани

5-9 классенче вĕрентмелли тăван (чăваш) чĕлхин ĕç программине çĕнетнĕ стандартпа килĕшӳллĕн тата И.А.Андреев, Г.Н.Семенова, Ю.М.Виноградов çырса хатĕрленĕ чăваш шкулĕсенче 5-9 классенче чăваш чĕлхи вĕрентмелли тĕслĕх программăна (2013 ç.) тĕпе хурса тунă.

**Вĕренӳ пособийĕсем:**

1. **1.** Чăваш чĕлхи.5 класс валли / Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф.Брусова. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2017.
2. Чăваш чĕлхи: 6 класс валли. Л.Г.Петрова, Ю.М.Виноградов. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2014.- 223с.
3. Ю.М.Виноградов, Л.Г.Петрова. Чăваш чĕлхи. 7 класс валли. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2016.- 223 с.
4. Ю.М.Виноградов, А.С.Егорова. Чăваш чĕлхи. 8 класс валли. –Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2018.- 223 с.
5. Ю.М.Виноградов,А.С.Егорова, Л.Г.Петрова. Чăвашчĕлхи. Синтаксис. 9 класс валли. – Шупашкар, 2020. – 229 стр.

**Вĕренӳ курсне вĕренӳпе методика тата информаци енчен тивĕçтерекен литература**

1. Л. П.Сергеев, Г.Ф.Брусова, В.В.Павлов. Диктант тексчĕсен пуххи. 5-9 класĕсенче чăваш чĕлхи вĕрентекен учительсем валли. Чăваш кĕнеке издательстви, 2012.
2. М.Г.Данилова, М.З.Табакова. Сочинени евĕр изложени тексчĕсен пуххи. Чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем валли. Шупашкар, 2006.
3. Л.Г.Петрова, В.А.Егорова. Диктант пуххи.5-11 классем валли. Шупашкар, 2006.
4. Е.В.Петрова, Е.А.Майков. Игровые задания по чувашскому языку и литературе. Методическое пособие для преподователей. Чебоксары, 1993.
5. 5. Л.Г.Петрова. Хăнăхтару пуххи. 5 класс валли. Шупашкар, 2009.

**Вĕренӳ предметнее пĕтĕмĕшле хаклани**

Чăваш чĕлхи кашни чăваш çыннишĕн тăван чĕлхе, амăшĕн чĕлхи пулса тăрать. Тăван чĕлхе пулăшнипе кашниех мĕн ачаран хăй таврашĕнчи тĕнчене ăнкарса пырать, пурнăç пулăмĕсене ăнланма, ăс-хакăлне ӳстерме вĕренет. Тăван чĕлхене пĕлни ытти чĕлхесене вĕренме, çавна май ытларах пĕлӳ илме пулăшать. Тăван чĕлхене вĕренсе шкул ачи хăйĕн пĕлĕвнеӳстерсе пырать, чĕлхе саккунĕсемпе паллашни ăна тĕрĕс шухăшлама вĕрентет. Унпа пĕрлех вĕренекенсен калаçăвĕ тата çыру хăнăхăвĕ аталанать, пĕтĕмĕшле культура шайĕпе тавра курăмĕ ӳсет, анлăланать.

Тăван чĕлхен воспитании тĕллевлĕхĕ пысăк: чĕлхемĕр çамрăк ăрăвативĕçлĕ шайра пăхса ӳстерме пулăшать,ĕçе хăнăхтарать, тĕрлĕ информации çăл куçĕпе усă курма вĕрентет.

Наци шкулĕнче тăван (чăваш) чĕлхене вĕрентессин **тĕп тĕллевĕсем** çаксем:

- чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулнине тĕпе хурса ăна хисеплеме, юратма, культура пулăмĕ иккенне, илемлĕх пуянлăхĕ пулнине ăнланма вĕрентесси;
- чăваш чĕлхине кулленхи пурнăçра, вĕренӳре усă курмалăх алла илме, кирек мĕнле самантра та тăван чĕлхепе усă курс ахутшăнма хатĕр пулма, пуплеве якатма хавха пухма хатĕрлесси;
- чăвашла пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма, чĕлхе нормисене хутшăнăвăн тĕрлĕ лару-тăрăвĕнче тытса пыма, этикетне пăхăнма хăнăхтарасси; чĕлхе тытăмĕ çинчен пĕлӳ парасси; чĕлхе факчĕсене уйăрса илме, тишкерме, танлаштарма, ушкăнлама тата хаклама пултараслăха аталантарасси; пуплевре усă куракан сăмах йышне ӳстересси; орфографипе пунктуации енчен тĕрĕс çырма верентесси; сăмахпа стиль енчен вырăнлă усă курм авĕрентесси.

**Предметăн вĕренӳ планĕнчи вырăнĕ**

Вĕренӳ планĕнче тăван (чăваш) чĕлхине вĕрентме 5 класра эрнере 1 сехет уйăрнă, шкул планĕ тăрăх 1 сехет шкул компонентĕнчен хушса панă, çапла 2 сехет вĕрентме май туса панă. Шкулăн календарлă графикĕ тăрăх вĕренӳ çулĕнче 34 эрне шутланать, çавна пула 5 класра тăван чĕлхене вĕренме 68 сехет палăртнă.

## II. Программа содержанийĕ

### 5 класс

ТĂВАН ЧĔЛХЕ ПУР ЧУХ ХАЛĂХ ТА ПУР (КӲРТĔМ УРОК) (1 сехет)

ПУÇЛАМĂШ КЛАССЕНЧЕ ВĔРЕННИНЕ АСА ИЛСЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ, ХУШСА ВĔРЕНТЕССИ (14 сехет)

1. Сасă тата сас палли. Алфавитри сас паллисен йĕрки, вĕсен хисепĕ. Сăмах тытăмĕ, тымар тата аффикссем. Вĕреннĕ пуплев пайĕсене аса илесси. Хутсăр предложени, унăн членĕсем. Пĕр йышши членсем, вĕсем союзсăр е союзсемпе çыхăнни. Пĕр йышши членсене чарăну паллисемпе уйăрасси. Чĕнӳ сăмахĕсем (обращенисем), вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси. Туйăмлă (кăшкăрулла) предложенисем. Предложени вĕçне чарăну палли лартасси. Союзсăр тата сыпăнуллă хутлă предложенисем, вĕсенче чарăну паллисем лартасси. Ыйтусăр тата ыйтуллă предложенисем. Ыйту сăмахĕсем: кам? мĕн? ăçта? хăçан? миçе? мĕншĕн? мĕн пирки? т.ыт.те.

Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем. Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем умĕн е хыççăн тăни, чарăну паллисем лартасси.

II. Ыйтуллă предложенисене ыйтусăррисенчен уйăрма хăнăхасси. Ыйтăва тĕрĕс йĕркелеме, ăна тĕрĕс хуравлама хăнăхасси (тулли хуравпа кĕске хурав). Предложени вĕçне тивĕçлĕ чарăну палли лартма, пĕр йышши членсемпе чĕнӳ сăмахĕсене чарăну паллипе уйăрма хăнăхасси.

ФОНЕТИКА. ГРАФИКА. ОРФОГРАФИ (26 сехет)

1. Уçă сасăсем, вĕсен мăшăрлăхĕ (хытă тата çемçе уçă сасăсем). Вырăсларан йышăннă сăмахсенчи [о] уçă сасă. Уçă сасăсене палăртакан сас палли сем (**а, ă, е, ĕ, у, ӳ, ç, ы, и, э, ю, я,**). Ю, я сас палли сем, вĕсем икĕ сасса (***йурă, йухать***) умĕнхи хупă сасă çемçелĕхне (***выля, Люся***) палăртни. Е сас палли икĕ сасса (***йешĕл, йепле***) тата [э] сасса палăртни (***этем, элек***). Чăваш чĕлхинчи [й] хупă сасă ытти уçă сасăсем умĕн те тăма пултарни: ***йăмра, йĕлтĕр, йывăр, йӳçĕ, йӳçĕтнĕ, кĕсйи***. Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултарайманни. Вырăсларан йышăнакан сăмахсенчи уçă сасăсен юнашарлăхĕ (***аэропорт, аут, поэт, Дуайт***). Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ (сингармонизм). Ку килĕшĕве пăхăнман тĕслĕхсем (***тăри, кавле, куклен, парнет***.ыт.те). Сăмахри аффикссем ытларах чух сингармонизма пăхăнни (***çурт-ра, пӳрт-ре, пур-лăх, çитмен-лĕх, лар-у, кĕт-ӳ***). Сингармонизма пăхăнман аффикссем: ***юлташ - сем, ял - ти, юрă – юрри, кай - иччен***т.ыт.те. Вырăсларан йышăнакан сăмахсем сингармонизма пăхăнманни (***орден, тетрадь, депо***). Вырăсларан йышăнакан сăмахсем çумне хушăнакан аффкссен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ. Хупă сасăсем. Ялан янăравлă (в, й, л, ль, м, н, вь, р) тата шавлă хупă сасăсем (к, п, т, х, с, ç, ч, ш). Хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ, уçă сасăсенчен килекен çемçелĕх (***пилеш, кĕлет, тĕлĕк***), уçă сасăсенчен килмен çемçелĕх (***халь, выльăх, супăнь, курать, юрать***).

Хытăлăхпа çемçелĕх йĕркине пăхăнман хупă сасăсем (с, ç, ч, й), вĕсем хытă уçă сасăпа та, çемçе уçă сасăпа та юнашар тăма пултарни: ***сарă — симĕс, çурла — çӳхе, чарăн– чĕрĕк, йурă — йӳнĕ.*** Шавлă хупă сасăсем янăраса е янăрамасăр илтĕнни, вĕсене çырура палăртасси. Хупă сасăсем вăраммăн илтĕнни, вĕсене çырура палăртасси (***кулă — кулли, ырă — ырри, ахаль — ахальлĕн***т.ыт.).

Вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенчи хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ, вĕсене çырура палăртасси.

***Промышленность — промышленноçăн, повесть — повеçре***йышши сăмахсене çырасси.

Икĕ пĕрешкел сасăпа вĕçленекен сăмахсене çырасси *(металл — металăн, металшăн, класс — класра, класăн*т.ыт.те). Вырăсларан çыру урлă йышăнакан сăмахсенче б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, ÿ сас паллисене çырасси. Ударени (пусăм). Чăваш сăмахĕсенчи ударени йĕрки. Вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенчи ударени. Уçă сасăсемпе хупă сасăсем сăмахран тухса ÿкни: ***эпĕ — эп, эсĕ — эс, вунă — вун, пурăн — пурнăç, тăхлачă — тăхлач, пар — патăм, панă; тăр — тăтăм, тăнă.*** Сасăсен ылмашăвĕ *(хут — хучĕ, тетрадь — тетрачĕ)*. *Чăваш чĕлхинчи сасăсемпе вырăс чĕлхинчи сасăсем, вĕсен пĕр пеклĕхĕпе уйрăмлăхĕсем. *Чăваш сăмахĕсенчи ударенипе вырăс сăмахĕсенчи ударени. II. Орфографипе орфоэпи нормисене çирĕплетессипе ĕçлесси. Хупă сасăсен çемçелĕхне тăван сăмахсенче тата вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенче çырура тĕрĕс палăртасси. Шавлă хупă сасăсен янăравлăхĕпе янăравсăрлăхне çырура тĕрĕс палăртасси. Хăнăхусене çирĕплетесси. Сăмахсене тĕрĕс ударенипе калама хăнăхтарасси. Орфографи словарĕпе тата правилисемпе уса курма хăнăхтарасси. Алфавита пăхмасăр калама вĕрентесси. Сăмахсенче алфавитпа çырма вĕрентесси.

ЛЕКСИКА. ПУПЛЕВ ТАТА ХУТШĂНУ. ПУПЛЕВ ĔÇĔ-ХĔЛĔ. ТЕКСТ. (16 сехет)

1. Лексика — чĕлхери сăмахсен пуххи. Лексика пурнăçри улшăнусемпе тачă çыхăнни. Кивелнĕ е кивелсе пыракан сăмахсем, ***кÿнтелен «свидетель», чуптар***(лаша тĕсĕ), ***шупăр, йĕлен***т.ыт. Çĕнĕ сăмахсем, ***ентешлĕх***(пĕр енчисем), ***юлташлăх «товарищество», ĕçтеш, ентеш, интернет, продюссер, коммерци, компьютер, фирма, слайд, ипотека*** т.ыт.

Сăмах пĕлтерĕшĕ. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем. Сăмахсен тÿрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсем. Ютран йышăннă сăмахсем, араб е перс сăмахĕсем, мари сăмахĕсем. Вырăссенчен йышăннă сăмахсем, калаçупа йышăннисем ***(витре, пĕремĕк, пĕрене, пăрăс, кĕрепле, чиркÿ***т.ыт.). Çырупа йышăннисем ***(костюм, галстук, пальто, район, область, тетрадь, блокнот, магазин***т.ыт.). Калаçупа кĕнисемпе çырупа кĕнисене çырура палăртасси. Синонимсем, антонимсем, омонимсем. Ятарлă сăмахсем (профессионализмсем). *Диалект сăмахĕсем. Литература нормине пăхăнман сăмахсем ***(ан палка, лăпăртат, епреме),***киревсĕр сăмахсем. II. Калаçу мĕнле лару-тăрура (кампа, хăçан, ăçта) иртнине кура сăмахсемпе вырăнлă уса курма хăнхтарасси ***(Хăна килсен аш пиçет; Сук çын укçи тăрнан кăшкăрать; Сук — вăрçтарать, пур — култарать***т.ыт.те.). Ваттисен сăмахĕсемпе, каларăшсемпе паллаштарасси, вĕсемпе тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. Синонимсемпе антонимсене тупма, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси. Тĕрлĕ йышши словарьсемпе (орфографи словарĕпе, синоним словарĕпе, чăвашла-вырăсла е вырăсла-чăвашла словарьпе) паллаштарасси, вĕсемпе усă курма вĕрентесси. Пĕлтерĕш тăрăх сăмахсене ушкăнлама хăнăхтарасси (тĕслĕхрен, апат-çимĕç, пахча çимĕç, çи-пуç, йывăç, кайăк-кĕшĕк, тырă-пулă ячĕсем), çав сăмахсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма вĕрентесси (сăмахран, ***чĕкеç чĕвĕлтетет, çерçи чĕриклетет, курак краклатать, çăхан кранклатать, куккук авăтать, карăш (путене) авăтать, шăпчăк ( тăри, шăнкăрч )*** юрлать т.ыт.те.

СĂМАХ ТЫТĂМĔПЕ ПУЛĂВĔ, ОРФОГРАФИ *(9 сехет)*

1. Сăмах тымарĕ. Аффикссем — сăмах тăваканнисем тата сăмаха улăштараканнисем. Сăмаха улăштаракан аффикссем çĕнĕ сăмах тума пултарни: ***каярахпа, тăхтарахпа, каçпа, ирпе; лĕмрен, авалтан; пĕрерĕн, виçшерĕн; кăмăллăн, хаяррăн, çиллессĕн*** т. ыт.те. Мăшăр сăмахсем, вĕсене тĕрĕс çырасси. Икĕ хут калакан сăмахсене тĕрĕс çырасси. Хутлă сăмахсем, вĕсен тĕсĕсем, тĕрĕс çырасси. Сăмах вырăнĕнче çÿрекен пĕрлешÿсем, вĕсен тĕсĕсем, тĕрĕс çырасси, ят пĕрлешÿсем ***(куç харши, пит çăмарти, тур палли, кача пÿрне, çĕнĕ çын, упа сарри***т.ыт.); глагол пĕрлешÿсем ***(ырă ту, кăмăл ту, усал ту, çула çит, пĕве кĕр, тăлăха юл, çука юл; такăнса ÿк, чирлесе ÿк, хăраса ÿк, ватăлса кай, ватăлса çит , т.ыт***те ). II. Çĕнĕ сăмаха сăмах форминчен уйăрма вĕренесси (тĕслĕхрен, ***пулăш — пулăшать, пулăшакан, пулăшни***— сăмах формисем;***пулăшу, пулăшуçă*** — çĕнĕ сăмахсем). Тăтшрах тĕл пулакан аффикссем хушса çĕнĕ (иккĕмĕшле) сăмахсем тăвасси, вĕсемпе пуплевре

усă курасси. Словарьсенче ***йăлана кĕр, ӳте кĕр, татăлса ан, çакăнса тăр***евĕр пĕрлешӳсене тупма хăнăхасси. Çав пĕрлешӳсене пуплеве кĕртесси, калаçура асăрхама вĕренесси. Сăмах пулăвĕпе çыхăннă орфографи хăнăхăвĕсене çирĕплетесси ***(хăю — хăюлăх, хăюллă; хастар — хастаррăн; вырт — выртта́р, ирт — иртте***рт. ыт. т.). Сăмахсенче пĕрле, уйăрм тата дефиспа çырмалли правилăсене çирĕплетесси.

ВĔРЕННИНЕ АСА ИЛНИ (2 сехет)

## Сехетсен шучĕ

| № п.п | Пайсем | Сехет шучĕ | Тĕрĕслев ĕçĕ | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси |
|---|---|---|---|---|
| 1 | Тăван чĕлхе пур чух халăх та пур (кӳртĕм урок) | 1 | - | - |
| 2 | Пуçламăш классенче вĕреннине аса илсе çирĕплетесси, хушса вĕрентесси | 14 | 1 | 1 |
| 3 | Фонетика, графика, орфографи | 26 | 2 | 2 |
| 4 | Лексика. Пуплев тата хутшăну. Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ. Текст. | 16 | 1 | 1 |
| 5 | Сăмах тытăмĕпе пулăвĕ, орфографи | 9 | 1 | 1 |
| 6 | Вĕреннине аса илни | 2 | 1 | |
| | Пĕтĕмпе | 68 | 6 | 5 |

## III. Вĕренӳ результачĕсем (мĕн пĕлмелле, мĕн пултармалла)

**Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕсем** виçĕ енлĕ пулмалла**:** харкамлăх результачĕсем (шкул ачи хăйĕншĕн тунисем), пур предмета та вĕренме кирлисем, тăван чĕлхепе хăйĕнпе кăна çыхăннă результатсем.

**Харкамлăх(личностные) результачĕсем**:

1) тăван чĕлхе чăваш халăхĕн наци пурлăхĕ пулнине, Чăваш Республикинче вырăс чĕлхипе тан патшалăх чĕлхи пулнине ăнланни; тăван чĕлхепе ӳлĕмрен кулленхи пурнăçра, суйласа илнĕ профессире уса курма пултарни;

2) чăваш чĕлхин илемлĕхне хаклама пултарни, тăван чĕлхене хисеплени, унпа мăнаçланни; чăваш пуплевĕн нормисене наци культурин пуянлăхĕ шайне лартса сыхласси кашни чăвашшăн пысăк тивĕç тесе йышăнни; пуплеве куллен-кун аталантарма тăрăшни;

3) шухăшпа туйăма палăртма усă куракан сăмахсем, грамматика хатĕрĕсем пуплевре йышлă пулни; ача хăй пуплевне (калаçнине те, çырнине те) сăнаса тивĕçлĕ хак пама пултарни.

**Пур предмета та (метапредметные)вĕренме кирлĕ** результатсем:

1) пуплевĕн мĕн пур тĕсĕпе усă курни:

- сăмахпа каласа е çырса пĕлтернĕ информацие тĕрĕс ăнланни;
- вулавăн тĕрлĕ мелĕпе усă курни;
- тĕрлĕ çĕртен (хаçат-журналтан, Интернетран, радиопа телевиденирен т.ыт.те) килекен материал çине таянса информаци пухма пултарни;
- ку е вăл темăпа çыхăннă материала вуласа е илтсе тупма, ăна пухса, тишкерсе, кирлине суйласа илме пултарни; пухнă информацие сыхлама, улăштарма тата кирлĕ çĕре çитерме пултарни (информаци çăл куçĕ хаçат-журнал, тĕрлĕрен техника хатĕрĕ пулма пултарать);
- пĕччен е ушкăнпа тумалли вĕренӳ ĕçĕн тĕллевне, йĕркине ăнланса илни, ĕç результатне каласа е çырса хаклама пултарни;
- шухăша сăмах вĕççĕн е çырса ирĕклĕ те тĕрĕс уçса пама пултарни;
- тантăшсем умĕнче пĕчĕк е пысăкрах доклад тума хăнăху пурри;

2) вĕренӳре илнĕ тĕрлĕ пĕлӳпе, нумай-нумай хăнăхупа яланхи пурнăçра усă курни; тăван чĕлхене вĕренсе пухнă пĕлӳпе тата хăнăхупа ытти предметсене (тăван мар чĕлхесене, литературăна т.ыт.те) вĕренме усă курни;

3) калаçнă май, пĕр-пĕр ĕç тунă чух е мĕнле те пулин тавлашуллă ыйтăва сӳтсе явнă чух çынсемпе тĕрлĕ çыхăнăва кĕме хăнăху пурри; пĕр-пĕр йĕркепе иртекен хутшăнура е яланхи калаçура наци культуринче çирĕпленнĕ пуплев нормисене пăхăнни.

**Предмета (предметные)вĕреннин** результачĕсем:

1) чăваш чĕлхи чăваш халăх чĕлхи, хамăр республикăра патшалăх чĕлхи (вырăс чĕлхипе пĕрле) пулса тăнине ăнланни; тăван чĕлхепе культура хушшинче тачă çыхăну пуррине пĕлни; чăваш чĕлхи уйрăм çынпа общество пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине ăша хывни;

2) тăван чĕлхене пĕлни чăваш культуришĕн, халăх пуласлăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине, çавăнпа чĕлхене вĕренме тивĕç пуррине ăнланни;

3) пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма пултарни:

*илтнине ăнланни тата вулав хăнăхăвĕ:*

- сăмахпа каласа е çырса пĕлтернине (текст тĕллевне, темине, тĕп тата хушма информацине) кирлĕ пек ăнланни;
- стильпе жанр енчен мĕнле пулнине пăхмасăр текста вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе (çиелтен пăхса тухни, паллашмалла пăхса тухни, вĕренни) усă курни;
- вуланă текста информаци енчен улăштарса çĕнетме (план тума, тезиссем çырма) пултарни; кĕнекепе, хаçат-журналпа ĕçлеме пĕлни;
- словарьсен тĕрлĕ тĕсĕпе, пĕлкĕчсемпе (вăл шутра электрон носителе кĕртнисемпе) усă курма хăнăху пурри;
- стильпе жанр енчен расна текстсене çын вулани тăрăх ăнланни; аудированин тĕрлĕ тĕсне (тулли ăнланни, тĕп содержанине ăнланни, кирлĕ информацие суйласа илни) алла илни;
- пуплев сыпăкĕсене содержани, функци, усă курнă чĕлхе хатĕрĕсем тăрăх танлаштарма пултарни;

*сăмах вĕççĕн калани тата çыру:*

- итленĕ е вуланă текста пĕр-пĕр виçепе кĕскетсе (улăштармасăр, план туса, тезис хатĕрлесе) каласа е çырса пани;
- шухăша сăмахпа каласа тата çырса ирĕклĕн те тĕрĕс уçса пама пултарни; текст тытăмне тĕрĕс тытса пыни (логикăлăх, шухăш юхăмĕн йĕркелĕхĕ, çыхăнулăх пурри, темăпа

килĕшсе тăни); çыраканнин пурнăçри пулăмсем çинчен, вулани-илтни çинчен хăй шухăшне калама хăнăху пурри;

- стильпе тĕсне кура хутшăну тĕллевне, лару-тăрăвне шута илсе сăмахпа каласа е çырса ку е вăл йышши текст хайлама пултарни; хутшăну задачисене кура ку е вăл чĕлхе хатĕрĕ суйласа илсе пĕр-пĕр жанр законĕсем тăрăх текст (калав, хаклав, çыру, расписка, шантару, заявлени) тума пултани;
- монологпа диалог тĕсĕсене пĕлни; ачан хăйĕн тантăшĕсем умĕнче кĕске хыпар вуласа пама, доклад тума хăнăху пурри;
- пуплевре литература чĕлхин орфоэпи, лексика, грамматика нормисене тытса пыни; сăмахсемпе пĕлсе усă курни; çырура орфографипе пунктуаци правилисене пăхăнни;
- çынсемпе калаçнă чух пуплев этикетне шута илни; чĕлхе хатĕрĕсем вырăнне пуплев хатĕрĕсемпе (мимикăпа, алă хусканăвĕпе) вырăнлă усă курни;
- кашни хăйĕн пуплевне сăнаса тĕрĕслесе тăма, содержани, чĕлхе енчен, хутшăну тĕллевне пурнăçлас тухăçлăхĕ енчен хаклама пултарни; грамматикăпа пуплев йăнăшĕсене тупма, тӳрлетме пултарни; харпăр хăй тунă текста лайăхлатма тата редакцилеме вăй çитерни;

4) чăваш чĕлхине тĕпчекен ăслăлăхăн никĕсне ăша хывни; чĕлхен шайĕсемпе единицисем хушшинчи çыхăнусене ăнланни;

5) чĕлхе ăслăлăхĕн тĕп ăнлавĕсене алла илни: чĕлхе вĕрентĕвĕ тата унăн тĕп пайĕсем; чĕлхе тата пуплев, пуплевпе усă курса хутшăнни, калаçу тата çыру; монолог тата диалог; пуплев ситуацийĕ; пуплевĕн функципе шухăшран килекен тĕсĕсем (калав, сăнлав, ăслав); текст; чĕлхе единицисем, вĕсен паллисем тата пуплевре усă курнă чухнехи уйрăмлăхĕсем;

6) сăмаха фонетика, тытăмĕ, пулăвĕ, лексика енчен тишкерме пĕлни, сăмах майлашăвĕпе предложение синтаксис енчен тишкерни; текста ун содержанийĕ, тĕп паллисемпе тытăмĕ енчен, пуплевĕн функцире палăракан тĕсĕсене кура, чĕлхе уйрăмлăхĕсене пăхса, илемлĕх хатĕрĕсене шута илсе тишкерни;

7) тăван чĕлхен эстетика функцине ăнланса илни, илемлĕ литература тексчĕсене тишкернĕ май пуплев единицин илемлĕхне курма пĕлни.

## IV. 5 класра тăван (чăваш) чĕлхепе вĕрентмелли тематика планĕ

| № | Урок теми | Сехет шучĕ | Электрон вĕренӳ ресурсĕсем |
|---|---|---|---|
| 1 | Тăван чĕлхе пур чух халăх та пур. Кӳртĕм. | **1** | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| Пуçламăш класра вĕреннине аса илсе çирĕплетесси, хушса вĕрентесси. Пуплев тата хутшăну. Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ. Текст. Чĕлхен функцирен килекен тĕсĕсем. | | **14** | |
| 2 | Вĕреннине аса илни. Сăмах тымарĕ. Аффикссем. (3§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 3 | Предложени, унăн членĕсем. Пĕр йышши членсем. | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 4 | Ыйтуллă тата ыйтусăр предложенисем. Кăшкăруллă предложении. (6§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 5 | Тĕрĕслев диктанчĕ «Пулăç упа». | 1 | |
| 6 | Текст. Унăн пайĕсем. (7§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 7 | Чĕнӳ сгмахĕсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси. (8§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 8 | Текст теми, тĕп шухăшĕ. ( 9§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 9 | Хутлă предложени. Союзсăр тата сыпăнуллă хутлă предложенисем. (10§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 10 | Хутлă предложени. Союзсăр тата сыпăнуллă хутлă предложенисем. (10§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 11 | Текст планĕ. (11§) | 1 | |
| 12 | Изложени («Кайăксен апатланăвĕ»). | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 13 | Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем. (12§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 14 | Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем. Диалог. (12§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 15 | Текст тĕсĕсем Сăнлав. Калав. Ăслав. (13§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| Фонетикăпа орфоэпи. Графикăпа орфографи. Пуплев тата хутшăну. Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ. Текст. Чĕлхен функцирен килекен тĕсĕсем. Чĕлхе тата культура. | | **26** | |
| 16 | Алфавит. Вĕреннине аса илни. (14§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 17 | Уçă сасăсем, вĕсен мăшăрлăхĕ. (15§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 18 | Уçă сасăсене палăртакан сас паллисем. (16§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 19 | Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ. (17§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 20 | Изложени. | 1 | |
| 21 | Калаçу чĕлхи. Илемлĕ чĕлхе. Официаллă чĕлхе. (20§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 22 | Хупă сасăсем. (21§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 23 | Ялан янравлă хупă сасăсем. (22§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 24 | Шавлă хупă сасăсем. (23§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 25 | Хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ. (24§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 26 | Хупă сасăсен çемçелĕхне çырура палăртасси. (25§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 27 | Тĕрĕслев диктанчĕ («Пыл хурчĕсен наркăмăшĕ»). | 1 | |
| 28 | Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни, ăна çырура палăртасси. (26§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 29 | Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни, ăна çырура палăртасси. (26§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 30 | Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенчи хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ. (27§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 31 | Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче *б, г, д, ж, з* сас паллисене çырасси. | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 32 | «Кăсăя» изложении. | 1 | |
| 33 | Вырăс чĕлхинчен çырупа йышгннă сăмахсенче *ф, ц, щ, я* сас паллисене çырасси. (29§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 34 | Ударени. (30§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 35 | Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенчи ударени. (31§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 36 | Вĕреннине аса илни. Словарь диктанчĕ. | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 37 | Сăмахри уçă сасăсем тухса ӳкме пултарни. (32§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 38 | Фонетика тишкерĕвĕ. | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 39 | Сасăсен ылмашăвĕ. (33§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 40 | «Фонетика, графика, орфографи, орфоэпи» темăсене вĕреннине аса илни. | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 41 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант («Шăкăлчи»). | 1 | |
| Лексика. Пуплев тата хутшăну. Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ. Текст. Чĕлхен функцирен килекен тĕсĕсем. Чĕлхе тата культура. | | **16** | |
| 42 | Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ (36§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 43 | Пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем. (37§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 44 | Пуплев этикечĕ. «Тантăшăм» сăнлав сочиненийĕ. | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 45 | Сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшсем. (38§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 46 | Омонимсем. (39§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 47 | Синонимсем. (40§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 48 | Антонимсем. (41§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 49 | Словарьсемпе усă курасси. (42§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 50 | Ятарлă сăмахсем (профессионализмсем) (43§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 51 | Йышăннă сăмахсем (44§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 52 | Кивелнĕ сăмахсем (45§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 53 | Диалект сăмахĕсем (46§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 54 | Литература нормине пăхăнман сăмахсем (47§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 55 | Сăпайлăх этеме илем кӳрет | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 56 | Лексика тишкерĕвĕ | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 57 | Тĕрĕслев диктанчĕ. «Тăмана» | 1 | |
| Сăмах тытăмĕпе пулăвĕ, орфографи | | **9** | |
| 58 | Сăмах тымарĕ тата аффикссем. | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 59 | Калав çырасси. «Тăван ял». | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 60 | Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссем. (49§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 61 | Аффикссем хушăнса пулнă сăмахсене тĕрĕс çырасси. (50§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 62 | Хутлă сăмахсем, вĕсен тĕсĕсем, вĕсене çырасси. (51§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 63 | Сăмах вырăнне çӳрекен пĕрлешӳсем, вĕсен тĕсĕсем. тĕрĕс çырасси. | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 64 | Мăшăр сăмахсем.<br>(52§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 65 | Икĕ хут калакан сăмахсем, вĕсене тĕрĕс çырасси. (53§) | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 66 | Тĕрĕслев диктанчĕ («Уйăх витĕмĕ»). | 1 | |
| **Вĕреннине аса илни** | | **2** | |
| 67 | Вĕреннине тĕрĕслесси. Тестсем. | 1 | Вĕренӳ порталĕ // https://portal.shkul.su/a/theme/6.html |
| 68 | Пĕтĕмлетӳ урокĕ | 1 | |

Хушса пани

**Пăрăнмасăр тумалли практика ĕçĕсем**

| № | Пăрăнмасăр тумалли практика ĕçĕсем | Тупмалли литература |
|---|---|---|
| 1. | Сăнлав сочиненийĕ («Кĕрхи кунсем») | |
| 2. | Тĕрĕслев диктанчĕ («Пулăç упа») | Петрова Л.Г. Егорова В.А. Диктант пуххи: 5-11 классем валли. - Шупашкар, 2006. - 9 с. |
| 3. | Изложени («Кайăксен апатланăвĕ») | Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф. Брусова. Чăваш чĕлхи. 5-мĕш класс валли. – Шупашкар, 2017 – 45 с. |
| 4. | Калав е сочинени («Хĕллехи вăрман») | |
| 5. | Тĕрĕслев диктанчĕ («Пыл хурчĕн наркăмăшĕ») | Петрова Л.Г. Егорова В.А. Диктант пуххи: 5-11 классем валли. - Шупашкар, 2006. (28 с.) |
| 6. | Изложени («Кăсăя») | Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф. Брусова. Чăваш чĕлхи. 5-мĕш класс валли. – Шупашкар, 2017. (104 с.) |
| 7. | Калав («Пирĕн стена хаçачĕ») | Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф. Брусова. Чăваш чĕлхи. 5-мĕш класс валли. – Шупашкар, 2017. – 106 с. |
| 8. | Тĕрĕслев диктанчĕ («Шăкăлчи») | . Л.П.Сергеев, Г.Ф. Брусова, В.В.Павлов. Диктант тексчĕсен пуххи: 5-9 классем валли. - Шупашкар, 2012 - 19с. |
| 9. | Сочинени «Тантăшăм» | Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф. Брусова. Чăваш чĕлхи. 5-мĕш класс валли. – Шупашкар, 2017. – 132 стр. 316 хăн. |
| 10. | Тĕрĕслев диктанчĕ («Тăмана») | Петрова Л.Г. Егорова В.А. Диктант пуххи: 5-11 классем валли. - Шупашкар, 2006 – 36 с. |
| 11. | Калав «Паянхи ял» | Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф. Брусова. Чăваш чĕлхи. 5-мĕш класс валли. – Шупашкар, 2017. – 196 с. 420 хăн. |
| 12. | Сочинени («Çуркунне çитрĕ») | Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф. Брусова. Чăваш чĕлхи. 5-мĕш класс валли. – Шупашкар, 2017. – 204-205 с. |
| 13. | Тĕрĕслев диктанчĕ («Уйăх витĕмĕ») | Петрова Л.Г. Егорова В.А. Диктант пуххи: 5-11 классем валли. - Шупашкар, 2006. – 41–42 с. |